Шалти ĕçсен пайĕнче

# «Пирĕн ĕç çăмăл пулма пултараймасть»

***Кашни çын, кашни организаци, предприяти çулталăк иртсен пĕтĕмлетӳ тăвать. Мĕнле ĕçсемпе палăрса юлнă, мĕнле кăтартусемпе вĕçленнĕ-ха иртнĕ çул? Хуравĕ пурин те пур, анчах тĕрлĕрен. Муркаш районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Евгений Дмитриевич МАКАРОВ çак ыйту çине панă хурав пире, пакунсăррисене те, пырса тивет. Мĕншĕн тесен милици сотрудникĕн тивĕçĕ – обществăлла йĕркелĕхе, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне сыхласси, Конституципе панă прависене хӳтĕлесси.***

**– Шалти ĕçсен пайĕн ĕç пахалăхне кăтартакан тĕп критерисенчен пĕри вăл преступленисен шучĕ тата вĕсене уçса парасси. Евгений Дмитриевич, эсир иртсе пыракан пай мĕнле вĕçлерĕ иртнĕ çула?**

– 2008 çул, кăçалхи çул пуçланнă пекех, çăмăл пулмарĕ. Эпир пурнăçлакан ĕç вăл çăмăл пулма та пултараймасть ĕнтĕ. Анчах та преступленисен шучĕ 603-рен 477 таран чакни палăрăмлă кăтарту тесе калас килет. Районти пур муниципаллă, право сыхлакан органсемпе, предприятисемпе организацисен тата учреждениисен ертӳçисемпе килĕштерсе, пĕр чĕлхе тупса ĕçлесе пынин витĕмĕ те пурах çакăнта. Преступленисен шучĕ чакни кашни тунă преступлени çине ытларах тимлĕх уйăрма май парать. Çавăнпа та вĕсене уçса парасси те пĕлтĕрхи çул ӳсрĕ. Кунта вара пирĕн сотрудниксем квалификацие куллен ӳстерсе пыни куçкĕрет.

Хамăрăн ĕçе вара эпир чăнах та тивĕçлипе, яваплăхпа тата ĕç пахалăхне ӳстерсе пурнăçлама тăрăшатпăр. Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерстви пирĕн ĕçе тишкерсе «юрăхлă» тесе хак пачĕ.

**– Ку, паллах, савăнтарать. Çапах та преступленисене тишкерес пулсан районта мĕнле преступленисем ытларах сарăлнă?**

– Пĕрремĕшĕ вăл – ют пурлăха вăрлани. Çакăн евĕр преступленисен шутне чакарма питĕ йывăр. Ют çынăн пурлăхĕ нумайăшне илĕртет пулас: выртать япала – илсе чикеççĕ. Преступлени пулчĕ те. Çапах та оперативлă ĕçленипе иртнĕ çул вĕсен хисепне (220) малтанхи çулхинчен (289) чылай пĕчĕклетме, çав хушăрах уçса парассине вара пысăклатма пултартăмăр. Шел пулин те, маларах преступлени тунă çынсем çĕнĕ преступленисем туни кăшт ӳсрĕ. Вĕсем çинче 139 преступлени. Ӳсĕр çынсем те ку енĕпе пĕлтĕр «палăрчĕç» – 81 преступлени тунă. Анчах та урамсенче, обществăлла вырăнсенче йĕркесĕрлĕх хуçаланмасть. Çакна эпир контроллесех тăратпăр, лару-тăрăва алăран вĕçертместпĕр.

**– Йывăр преступленисене хирĕç кĕрешессипе ĕçсем мĕнлерех?**

– Ют çын килне çĕмĕрсе кĕрсе, вăрă-хурахла тата вăйпа усă курса çаратни йывăр преступленисем шутне кĕреççĕ. Мĕншĕн тесен ĕçсем преступление тăвакансен чăрсăрлăхне тата вĕсем обществăшăн хăрушă пулнине кăтартса pараççĕ. Çавăнпа та асăннă преступленисене уçса парассине ӳстерни тата çак преступленисем чакни пуриншĕн те лайăх пулăм. Вĕсене хирĕç кĕрешессинче тата уçса парассинче çынсен куçне курăнман, анчах та питĕ йывăр ĕç. Çавăнпа та çынсен хăйсен те питĕ асăрханусллă пулмалла, пурлăха ют çынсене кăтартма тăрăшмалла мар.

Вăрланă пурлăха тата укçана эпир яланах хуçисене тавăрса паратпăр. Граждансене çулталăкра каялла тавăрса панă пĕрлĕхлĕ сумма 7800 пин тенкĕпе танлашрĕ.

**– Преступленисен хисепĕ чакса пыни курăнать, çул çитмен ачасем тăвакан преступленисем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Çул çитменнисем тунă преступленисен хисепĕ 15-пе танлашрĕ. Малтанхинчен чылай чакрĕ вĕсен хисепĕ. Профилактика ĕçне вăйлатни хăйĕн витĕмне кӳрет. Çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени ертӳçин В.М. Максимов майорăн тата подразделени сотрудникĕсен тивĕçĕ çакăнта курăнать. Çапах та ку пулăм лăпланмаллине пĕрре те пĕлтермест. Малалла та çанă тавăрсах ĕçлемелле, çитĕнекен ăрăва криминаллă пурнăçран сыхламалла.

**– Евгений Дмитриевич, терроризмла тата экстремизмла характерлă преступленисем ан пулччăр тесе шалти ĕçсен пайĕ мĕнлерех ĕçлесе пырать?**

– Терроризмла тата экстремизмла характерлă, çавăн пекех наркотиксемпе тата хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе кĕрешесси, профилактика ĕçĕсене туса пырасси те пирĕн пайра пысăк пĕлтерĕшре. Ку енĕпе те тăрăшсах ĕçлетпĕр. Акă Республика кунне паллă тунă чухне юнашар районсенчи ĕçтешсемпе пĕрле комплекслă ĕçлерĕмĕр. Чрезвычайлă лару-тăру пулмарĕ. Наркотиксене тата хĕç-пăшала вăхăтра туртса илнине пула пĕлтĕр ку тĕлĕшпе преступленисем пулмарĕç. Хĕç-пăшал туртса илни пĕлтĕр 5 тĕслĕх пулчĕ. Наркотиксемпе çыхăннă преступленисен шучĕ саккăрпа танлашрĕ. Вĕсенчен пĕр преступление тунишĕн пирĕн район çыннине айăпланă ĕнтĕ. Ыттисем – ют районтисем, республикăрисем.

**– Сотрудниксем квалификацие ӳстерни пирки асăнтăмăр, çамрăксем ĕçлеме кăмăл тăваççĕ-и тата шалти ĕçсен пайĕнче?**

– Кадрсем енĕпе илес пулсан, пирĕн штат çамрăк сотрудниксемпе пуянланчĕ. Паянхи кун та икĕ вырăн пурха. Кăçал тата тивĕçлĕ канăва тухакансем паллă. Çавăнпа та çара кайса килнисене ĕçлеме чĕнетпĕр. Пирĕн пайра ĕçленĕ тапхăрта вара тӳлевсĕр вĕренсе пыма та май пур. Тĕслĕх илмелли ĕçтешсем вара аслисем хушшинче те, çамрăксем хушшинче те сахал мар. Ю.Г. Соловьев, В.В. Лобастов, А.П. Осипова, З.М. Можарова ветерансем те час-часах килсе сĕнĕвĕсемпе пулăшаççĕ.

Сăмах май, кăçал районти шалти ĕçсен пайне йĕркеленĕренпе февралĕн 22-мĕшĕнче 65 çул çитет. Çак уяв ячĕпе эпĕ халь шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракан пур сотрудника та, пирĕн ветерансене те саламлатăп. Пĕлетĕп, пирĕн ĕç йывăр, анчах ăна туса пыма сирĕн вăй-хăват çиттĕр, çирĕп сывлăх пултăр. Çемйĕрсенче те тату пурнăçпа килĕшӳ сунатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт хыпарĕсем

# Республикăри спорт ăмăртăвĕ – Муркашра

Республикăри тăваттăмĕш хĕллехи ял спорт ăмăртăвĕн финалĕ кăçал **февралĕн 27-28-мĕшĕсенче** Муркашра иртет. Ăмăртăва Çĕр ĕçченĕн çулталăкне халалланă. Анчах та Муркаш районĕ йĕркеленнĕренпе 65 çул çитнĕ май пирĕн пата ытти район спортсменĕсем килни чыс кӳрет. Çак икĕ куна тăсăлакан мероприятие тивĕçлĕ шайра ирттерессипе йĕркелӳ комиссийĕ ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ. Ăмăртăва савăнăçлă лару-тăрура «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче уçма палăртнă.

Ăмăрту анлă та интереслĕ иртĕ. Финала йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене (йĕлтĕрпе чупасси тата эстафета), полиатлон (вăй гимнастики, йĕлтĕрпе чупасси тата пневматикăлла винтовкăран пересси), кире пуканĕ çĕклессине (арçынсем хушшинче те, хĕрарăмсем хушшинче те), спорт çемйисен ăмăртăвĕсене (хутăш тата йĕлтĕр эстафетисем, винтовкăран пересси), механизаторсен ăмăртăвĕсене (йĕлтĕрпе чупасси, тракторпа каясси, винтовкăран пересси), шашкăлла тата шахматла выляссине, шывра ишессине (уйрăмшарăн тата эстафета) кĕртнĕ. Халĕ республикипех командăсене йĕркелес тапхăр пырать. Унта районсенче çак хĕллехи сезонри спорт ăмăртăвĕсен пĕтĕмлетĕвĕсене мала хурĕç. Пирĕн районта та командăна çак йĕркепех хатĕрлеме пуçланă.

Çак ăмăртăва тухмалли заявкăсене Чăваш Республикин Спорт министерствинче февралĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

**В. ПЕТРОВ,**
**районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ.**

# Умра – татах ăмăртусем

Иртнĕ шăмат кун хĕрарăмсем волейболла выляссипе ăмăртрĕç. Ытти чухнехи пекех, кăçал та ăмăрту интереслĕ пулчĕ. Мăн Сĕнтĕрсем мала тухрĕç.

**Февралĕн 7-мĕшĕнче** вара Спорт çуртĕнче волейболла выляссипе ветерансем (40 çултан аслисем) ăмăртаççĕ. Вунă сехет тĕлне 9 участник тата 1 представитель пулни çинчен заявкăсене унтах йышăнаççĕ. Ĕçлекен коллективсем активлă пуласса шанатпăр.

Призыв вăхăтне çитнĕ тата кĕçĕнрех яшсем валли вара **февралĕн 11-мĕшĕнче** Муркашри вăтам шкул тирĕнче ăмăрту иртĕ. Вĕсем винтовкăран тĕл перессине тĕрĕслĕç. Командăра 5 яшпа 1 представитель пулмалла. Заявкăсăр пуçне хăрушсăрлăх инструктажне ирттернин рапорчĕ те, хушса çырнă свидетельствăсемпе паспортсем кирлĕ.

Ăмăртусенчи çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе парнесем кĕтеççĕ.

ООО «Газпром» уведомляет

# ГАЗОПРОВОД ЯВЛЯЕТСЯ ИСТОЧНИКОМ ПОВЫШЕННОЙ ОПАСНОСТИ

К сведению владеющих земельными участками или (и) производящих работы на земле юридических лиц любой правовой формы собственности и физических (частных) лиц.

**ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» в лице филиала ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ** уведомляет, по землям Моргаушского района проходят магистральные газопроводы и газопроводы-отводы высокого давления (до75 атм.), являющиеся объектами повышенной опасности!

**Строительными нормами и правилами (СНиП 2.05.06-85;) установлены ЗОНЫ МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ от осей магистральных газопроводов и их отводов (МГ) и границ газораспределительных станций (ГРС) (далее по тексту – ОПАСНАЯ ЗОНА)** до населенных пунктов, отдельных промышленных и сельскохозяйственных предприятий, зданий и сооружений, отдельно стоящих нежилых и подсобных строений, гаражей и открытых стоянок для автотранспорта, коллективных садов, автомобильных и железных дорог, **ОПАСНЫЕ ЗОНЫ** составляют от 100 до 700 метров в зависимости от диаметра газопровода, степени ответственности объектов и служат для обеспечения безопасности этих объектов.

**ЗАСТРОЙКА ОПАСНЫХ ЗОН МГ и ГРС НЕ ДОПУСКАЕТСЯ. ПОСТРОЕННЫЕ В НИХ СООРУЖЕНИЯ ПОДЛЕЖАТ СНОСУ БЕЗ ВЫПЛАТЫ КОМПЕНСАЦИИ.**

**ПРИВАТИЗАЦИЯ ЗЕМЕЛЬ В ОПАСНЫХ ЗОНАХ МГ и ГРС НЕ ДОПУСКАЕТСЯ БЕЗ СОГЛАСОВАНИЯ С ПРЕДПРИЯТИЕМ, ЭКСПЛУАТИРУЮЩИМ ГАЗОПРОВОДЫ – ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»!**

Кроме того, **Правилами охраны магистральных трубопроводов**, утвержденными Постановлением Правительства и Госгортехнадзора РФ (№ 9 от 22 апреля 1992 года), в целях исключения возможных повреждений газопроводов, установлены **ОХРАННЫЕ ЗОНЫ** газопроводов в виде участков земли, примыкающих к газопроводу на всем протяжении на расстоянии 25 метров от оси газопровода с каждой стороны и в 100 метрах от каждой стороны ограждения ГРС. Любые работы в охранных зонах **без ПИСЬМЕННОГО РАЗРЕШЕНИЯ** Филиала ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, эксплуатирующего газопроводы, ЗАПРЕЩЕНЫ.

В охранных зонах категорически запрещены, разведение огня, размещение источников огня, свалка мусора и т.д.

Механическое повреждение газопровода высокого давления приведет к взрыву большой разрушительной силы, человеческим жертвам, материальным потерям и прекращению газоснабжения потребителей.

**Сведения о местонахождении газопроводов заинтересованные юридические и физические лица могут получить в администрации района и** в Филиале ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ.

При обнаружении утечек газа, по вопросам производства строительно-монтажных и других работ в зоне прохождения газопроводов, а также для предупреждения нежелательных последствий при оформлении сделок с землями, по которым проложены газопроводы, обращайтесь в Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ по следующему адресу:

**429620, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел. 21-09-20, 30-54-22.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Участник долевой собственности Пагеев Александр Александрович, 07.06.1949 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хундыкасы, ул. Лесная, д. 83, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СХПК «Хлебороб», расположенного в поле № 1 площадью 1,24 га пашни.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**

**2. Пагееву Александру Александровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хундыкасы, ул. Лесная, д. 83.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:280303:85, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:280303, площадью 6000 кв. м.**

**Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:170901:580, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:170901, на срок 49 лет, площадью 6000 кв. м.**

**Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 12-13.**

**Продаю кирпич: красный одинарный М-100, М-125, М-150, красный полуторный пустотный М-125, силикатный, КББ 20х20х40, керамзит, гравмассу, кирпич половняк. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 7-8.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-5.**

**Приход Владимирской иконы Божией Матери в с. Моргауши начинает оказывать полный комплекс ритуальных услуг. Гробы и другие ритуальные принадлежности можно приобрести в церкви. 2-2.**

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 03.02.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3825.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.